Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи ҫу уйăхĕн 5-мĕшĕнчен пуҫласа тухать

93 (8054) № ✻ Шăмат кун, 2012 ҫулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 1-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Агробизнес аталанăвĕнчи ҫĕнĕлĕхсем

## Район ҫĕнĕ шая тухать

Ăнăҫу никĕсĕ ҫĕнĕ технологисемпе ĕҫ йĕркелĕвĕнче пулни вăртăнлăх мар. Анчах вĕсене алла илесси нумай чухне йывăррăн пулса пырать е тепĕр чух пачах та вырăнтан тапранаймасть. Ҫапла вара ҫĕнĕ технологисемпе ҫĕнĕлле шухăшлав тесе касса кайсах калаҫни ытларах чух сăмах ҫинчех юлать.

Пĕр вырăнта тăракан вуншар предприяти хушшинче те ҫĕнĕлĕхсемпе хĕҫ-пăшалланса малалла сулмаклă утакансем те пур-ха пирĕн хушăмăрта. Вĕсен ĕҫĕпе тата мал туртăмлă аталанăвĕпе паллашни ытти сене те ҫĕнĕлĕхсем тĕлĕшпе хăюллăрах пулма хистессе шанас килет паян.

Чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнче «Путь Ильича» агрофирмăн Шаптакри сĕт ферми ҫывăхĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли ҫĕнĕ производство комплексĕ хута кайрĕ. Ҫав ятпа иртнĕ савăнăҫлă митинга Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ Михаил Игнатьев та килсе ҫитрĕ. Районти агропромышленность комплексĕн аталанăвне пурнăҫа кĕрекен ҫĕнĕ комплекса хута янă ҫĕрте Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш сумĕ Сергей Павлов, ЧР Патшалăх Канашĕн комитет председателĕ тата «Единая Россия» политика партийĕн регионти политканашĕн секретарĕ Николай Малов, «Россельхозбанк» акционерлă обществăн Чăваш регионĕнчи филиалĕн директорĕ Ирина Письменская, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин, район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ростислав Тимофеев, районти хуҫалăхсен ертӳҫисемпе специалисчĕсем хутшăнчĕҫ.






Пухăннисене «Путь Ильича» агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕ Олег Дельманпа унăн ашшĕ Александр Дельман хута каякан ҫĕнĕлĕхсен кашни утăмĕпе тĕплĕн паллаштарчĕҫ.

Ҫĕнĕ сĕт комплексĕнче 500 ĕне пулĕ. Вĕсене пăхса усрама кунта паянхи куна чи малта пыракан технологисемпе ĕҫлĕҫ. Ҫакнашкал ҫĕнĕлĕх районна килсе кĕни савăнтарать кăна. Хăйĕн савăнăҫне Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ М. Игнатьев та пытармарĕ:

– 20 ҫул каялла мана ҫакăн пек ферма тăвасси пирки калана пулсан эпĕ ĕненмĕттĕм. Паян вара ку – пирĕн пурнăҫ чăнлăхĕ, агробизнес аталанăвĕн черетлĕ утăмĕ. Европăри фермерсенчен вуншар ҫул юлса пынине эпир паян хăвăртлăн ҫитсе пыратпăр. Кама савăнтармĕ ҫакă? Пурне те тивĕҫтерекен ҫĕнĕлĕхе ҫул панă ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне, «Путь Ильича» агрофирмăн гендиректорне Олег Дельмана куншăн пысăк тав. Унăн тĕслĕхне алла илсе ытти предпринимательсем те рынок хутшăнăвĕсен тапхăрĕнче ял хуҫалăхне инвестицисем хывма шикленмесе шанас килет.

Ҫĕнĕ технологисем ҫинче никĕсленнĕ 200 миллион тенкĕнĕ яхăн «Россельхозбанкран» илнĕ кредитпа ĕҫе кĕртнĕ комплекс 1000 сумалли ĕнелĕх проектăн ҫурри кăна-ха. Пысăк ĕҫе пуҫăннă инвесторсем ҫур ҫулта чарăнса тăмасса уява пынă кашни ҫын никам каламасăрах ăнланчĕ. Ҫапла пултăрччĕ те!

**А. БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: уяв саманчĕ; ҫĕнĕ комплекс.**

**Автор сăн ӳкерчĕксем.**

## «Тăван радио» калаҫма пуҫлать

Ноябрĕн 28-мĕшĕнче Мускавра радиочастотасемпе эфира тухассишĕн конкурс иртнĕ. Пурĕ конкурса 10 радиочастота тăратнă пулнă, иккĕшĕ – Шупашкар хулипе: 0,25 кВт хăватлă передатчиклă 100,3 МГц тата 1 кВт хăватлă 103,0 МГц частотасем.

Асăннă частотасене выляса илессипе кашнинпех 5-шер радиостанци конкурса хутшăннă, вĕсен йышĕнче «Чăваш Ен наци радиовĕ» ЧР автономлă учрежденийĕ, «Тăван радио», «Серебряный дождь», «Радио-дача» тата «Аура-Радио» чикĕллĕ яваплăхлă пĕрлешӳ («Газпром-Медиа Холдингăн «Ача-пăча радиовĕ»).

Конкурса хутшăнакансене федераллă комисси хак панă. Чăваш Ен интересĕсене конкурсра республикăн информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева тата Патшалăх Канашĕн депутачĕ Игорь Кушев хӳтĕленĕ.

Конкурс пĕтĕмлетĕвĕпе 100,3 МГц частотана «Тăван радио» («Родное радио») выляса илнĕ, 103,0 МГц частотана – «Детское радио».

«Тăван радио» учредителĕ Чăваш Енĕн наци телерадиокомпанийĕ пулса тăрать. Ҫак радиона обществăлла политика, социаллă передачăсене, вĕрентӳ, литература тата кĕвĕ эфира кăларас тĕллевпе йĕркеленĕ. Паян эфира тухакан «Наци радионе» (105,0 FM) Шупашкарта та, Ҫĕнĕ Шупашкарта та итлейместĕҫ. Вĕсенче вара республикăра пурăнакансен 47 процентне яхăн ҫын шутланать.

«Тăван радиона» вара республикăн кашни кĕтесĕнчех итлеме май пулĕ. Вăл кашни кунах эфирта чăвашла тата вырăсла «калаҫĕ».

**Чăваш Ен влаҫ органĕсен порталĕнчен.**

Пурнăҫ шайĕ

## Апат-ҫимĕҫ хакĕсем

Паян апат-ҫимĕҫ хакĕсен вылявĕ кашни утăмрах сисĕнет. Ку вăл ҫынсен пурнăҫ шайĕ ҫине тӳрремĕнех витĕм кӳрекен пулăм. Чăваш Республикин статистика органĕсем пĕлтернĕ тăрăх чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне Атăл ҫи федераллă округри регионсем хушшинче пирĕн республикăра чи пĕчĕк хаксем пулнине палăртнă. Тĕслĕхсемпе каласан (килограмшăн):

– ҫĕр улми – 8,89 тенкĕ (чи пысăк хака Самар облаҫĕнче палăртнă – 14,80 тенкĕ);

– шурă пуҫлă купăста – 9,61 тенкĕ (чи пысăк хака Пушкăрт Республикинче палăртнă – 14,48 тенкĕ);

– пан улми – 43,02 тенкĕ (чи пысăк хака Пермь крайĕнче палăртнă – 64,74 тенкĕ);

– сысна какайĕ – 184,81 тенкĕ (чи пысăк хака Самар облаҫĕнче палăртнă – 225,85 тенкĕ).

Атăл ҫи федераллă округри регионсем хушшинче пирĕн республикăра хаксен вăтам шайне ҫак продуктсем тĕлĕшпе палăртнă: рис (32 тенкĕ те 59 пус – 6-мĕш вырăн), сухан (12 тенкĕ те 59 пус – 7-мĕш вырăн), чăх ҫăмарти (36 тенкĕ те 40 пус – 8-мĕш вырăн).

**ЧР Экономика аталанăвĕн министерстви.**

## Воспитательсен ĕҫ укҫи ӳсмелле

Декабрьте воспитательсен ĕҫ укҫине 24 процент чухлĕ ӳстерме палăртаҫҫĕ. Кун пирки республика правительствин черетлĕ канашлăвĕнче йышăну тунă.

Ҫак пуҫарупа Вĕрентӳ тата ҫамрăксен политикин министерстви тухнă. Декабрьте воспитательсен ĕҫ укҫи пĕтĕмĕшлĕ пĕлӳ сферинчи вăтам ĕҫ укҫин 80 процентĕне танлашмалла. Ҫитес ҫулхи февральтенпе вара ҫак сферăри вăтам ĕҫ укҫи чухлĕ пулмалла. Воспитательсене декабрьте пысăкрах ĕҫ укҫи тӳлеме республика бюджечĕнчен 17 миллион тенкĕне яхăн уйăраҫҫĕ. Ҫапла вара воспитательсем вăтамран уйăхра 12830 тенкĕ илмелле.

Владимир Иванов министр ĕҫ укҫине ӳстернĕ малтанхи тапхăрсенче ку ыйтăва татса парасси муниципалитетсен шайĕнче мĕнле ĕҫленинчен килнине палăртнă. Сăмахран, ку таранччен Улатăр, Вăрмар, Тăвай районĕсенчи шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсенче ĕҫлекенсен шалăвĕ ыттисенчен пĕчĕкрех пулнине аса илтернĕ. Михаил Игнатьев Пуҫлăх ку тĕлĕшпе республикăра кашниншĕнех условисем пĕр пек пулмаллине палăртнă.

Йыхрав

## Тĕп ыйту – район бюджечĕ

Депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн 2012 ҫулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнчи 27 № хушăвĕпе депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 23-мĕш ларăвне 2012 ҫулхи декабрĕн 6-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусен залĕнче 10 сехетре пухма йышăннă.

Ларура пăхса тухма кун йĕркине кĕртнĕ ыйтусем шутĕнче «Депутатсен районти Пухăвĕн 2011 ҫулхи ноябрĕн 30-мĕшĕнчи С-12/3 № «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2012 ҫулхи бюджечĕ ҫинчен» йышăнăвне улшăнусем кĕртесси ҫинчен», «Муркаш районĕн 2013 ҫулхи экономикăпа социаллă пурнăҫ аталанăвĕн прогнозĕ ҫинчен», «Депутатсен районти Пухăвĕн «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2013 ҫулхи тата планланă 2014 – 2015 ҫулсенчи тапхăри бюджечĕ ҫинчен» йышăнăвĕн проекчĕ ҫинчен», «Газ хуҫалăхĕн объекчĕсене Муркаш районĕн муниципаллă харпăрлăхĕнчен Чăваш Республикин патшалăх харпăрлăхне тӳлевсĕр парасси ҫинчен».

Пуху ларăвне район администрацийĕн структура подразделенийĕсен ертӳҫисене, ял тăрăхĕсен пуҫлăхĕсене, районти предприятисемпе организацисен тата учрежденисен ертӳҫисене йыхравлаҫҫĕ.

Сывлăх

## Юн парса пулăшма

Чирлисене юн парса пулăшасси – питĕ пархатарлă ĕҫ. Ҫак ĕҫе республикăра юлашки ҫулсенче ҫын йышлăрах хутшăнма пуҫларĕ.

Муркаш районĕнче те юн паракансене ҫитес кунсенче ятарлă графикпа йышăнаҫҫĕ: декабрĕн 5-мĕшĕнче – Йӳҫкассинче, декабрĕн 13-мĕшĕнче – Нискассинче, декабрĕн 18-мĕшĕнче – Турайра, декабрĕн 19-мĕшĕнче – Москакассинче, декабрĕн 20-мĕшĕнче – Шетмĕпуҫĕнче, декабрĕн 24-мĕшĕнче – Ярапайкассинче, декабрĕн 25-мĕшĕнче – Мăн Сĕнтĕрте, декабрĕн 26-мĕшĕнче – Муркашра, декабрĕн 27-мĕшĕнче – Юнкăра.

Донорсене паспорт пулсан ҫеҫ регистрацилеҫҫĕ. Юн панă кун донорсене апатланма 120 тенкĕ компенсаци параҫҫĕ, гемотрансмиссивлă инфекцисенчен тĕрĕслеҫҫĕ. Кунсăр пуҫне ҫак кун ĕҫрен хăтармалли (уншăн ĕҫ укҫине тӳлеҫҫĕ) справкăпа тивĕҫтереҫҫĕ. Донорăн тата тепĕр кун кану кунĕ илме право пур (Ĕҫ кодексĕпе килĕшӳллĕн).

Юн парассинчен хăрамалли нимĕн те ҫук. Организм панă юн ҫийĕнчех пухăнать, ҫĕнелет. Донорсене медицина ĕҫченĕсем тĕрĕслесех тăраҫҫĕ. Юн илнĕ чухне пĕрре усă курмалли хатĕрсемпе ҫеҫ ĕҫлеҫҫĕ.

Пирĕн район ҫыннисем ҫак пархатарлă ĕҫе активлă хутшăнасса шанатпăр.

**Г. СОКОЛОВА,**

**Муркашри тĕп больницăн эпидемиолог врачĕ.**

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă, юратнă ҫыннăмăра – Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Александр Геннадьевич НИКИТИНА** 55 ҫулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вĕҫсĕр юрату, ăнăҫу сунатпăр. Яланах ҫавăн пек савăнăҫлă, кăмăллă, хастар пул. Турă сана вăй-хал парнелетĕр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн пысăк телей, савăнăҫ.

**Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, ҫывăх ҫыннисем, Сорокинсен, Григорьевсен, Шойкинсен, Ухваринсен, Ивановсен, Павловсен, Алимасовсен ҫемйисем.**

# ПЕНСИОНЕР

**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн кăларăмĕ**

## Программа вĕçленмен, малалла пырать

**Эсир пĕлесшĕнччĕ**

***Тĕрлĕ сас-хура хăвăрт саралать. Хăшĕ-пĕри каланă тăрăх патшалăх пенсисене хушса финанслассин прграмми «ĕçлеме» пăрахнă. Çавна май ку ыйту пирки Раççей Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхне Алексей КОНСТАНТИНОВА тĕплĕнрех ăнлантарса пама ыйтрăм. Алексей Витальевич хавассăн килĕшрĕ:***



– Тӳрех каласа хăвармалла, ку сас-хура чăнлăхпа пачах та тӳр килмест. Кун пирки Раççей Пенси фончĕ те официаллă майпа пĕлтерчĕ. Патшалăх пенсисене хушса финанслассин условийĕсемпе срокĕсене 2008 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче йышăннă 56-ФЗ № Федераллă саккунпа пăхса хунă. Программăна хутшăнас текенсем пĕрремĕш взноса 2013 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен хывма пултараççĕ. Ун хыççăн татах 10 çул хушши программа участникĕ хăйĕн хушма пенсийĕ валли çулталăкне 2000 тенкĕрен тытăнса 12000 тенкĕ таран хывса тăма пултарать. Паллă ĕнтĕ, çав суммăлăх ăна патшалăх татах хушса парать.

Çапла вара программа вăйра, вăл вĕçленмен-ха. Программăна хутшăнакансем умĕнчи пур обязательствăсене те туллин пурнăçлаççĕ. Халĕ вара прграммăна малалла тăсасси пирки ыйтăва Раççей Федерацийĕнчи пенси системине нумай вăхăтлăх аталантарассин стратегине палăртнă май сӳтсе яваççĕ.

Паянхи куна илес пулсан Раççейĕпе хăйсен пенсийĕсене патшалăх хушса финанслассин программине хутшăнакансем 9 миллион çын. Асăннă программăна хутшăнма республикипе 130 пин ытла çын, районĕпе 900 çын заявлени çырса панă.

Нумаях пулмасть патшалăх хăйĕн çине илнĕ обязательствăсене пурнăçлама, пенсие тухакансене хушса финанслană пенси суммине тӳлеме тытăнчĕ. Çавăнпа та асăннă программăпа интересленекенсен шучĕ те самай ӳсрĕ. Çакна район кăтартăвĕсемпе те çирĕплетсе пама пултаратăп. Акă иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, районта патшалăх пенсисене хушса финанслассин прграммине хутшăнма заявлени çырса паракансен шучĕ 20 (!) хут ӳсрĕ. Кунпа пĕрлех граждансем хывнă взноссен сумми те палăрмаллах пысăкланчĕ.

Раççей гражданинĕ 14 çул тултарнă пулсан вăл патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнма пултарать ĕнтĕ. Çавăнпа пĕрлех пенсие тухнисем те хăйсен пенси виçине палăрмаллах ӳстерме пултараççĕ. Программăна хутшăнма кăмăл тăватăр пулсан Пенси фондне пырса заявлени çырма пултаратăр е хăвăрăн ĕç вырăнĕнче бухгалтерие заявлени памалла. Кунсăр пуçне килтен тухмасăр та программа участникĕ пулса тăма май пур. Интернет урлă патшалăх услугисен пĕрлехи порталне (www.gosuslugi.ru) кĕмелле. Гражданесенчен заявленисене банксем те, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсем те йышăнаççĕ. Пенси фончĕ вĕсемпе алă пуснисене пĕр-пĕрин хушшинче çирĕплетесси пирки килĕшӳ туни кирлĕ кăна.

Ĕçлекен граждансемшĕн программăна хутшăнмалли чи ансат мел вăл – взноссене ĕç вырăнĕнче ĕç укçинчен куçарса тăрасси. Çавна валли ертӳçĕ ячĕпе заявлени çырмалла, уйăхсерен Пенси фондне мĕнле сумма куçарса тăмаллине кăтартмалла.

Кунсăр пуçне кирек кам та банка пырса взнос тӳлеме пултарать. Кунта тĕрлĕ вариант пур. Чи ансат форма – квитанци çырмалла та банк сотрудникĕ патне пымалла кăна. Е тата çапла та тума пулать. Пенси фондне пырса штрих-кодлă ятран паракан çырнă квитанци илмелле те палăртнă суммăна кăтартса взноса Перекет банкĕн тӳлев терминалĕ урлă куçармалла.

Взноссене квитанцисĕр те тӳлеме пулать. Апла тăвас тесен банкоматсемпе Перекет банкĕн тӳлев терминалĕсенче взноса банк картти çинчен куçармалла е укçан тӳлемелле. Ăна валли обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельстви çинчи лицевой счет номерне кăна палăртмалла.

Программа участникĕсем хывнă взноссене тата патшалăх хушса тӳленисене ертсе пыракан компанисене тата патшалăхăн шутланман пенси фончĕсене куçарса параççĕ. Унта вĕсен пухăнакан пенсийĕсене инвестицилеççĕ. Енчен те гражданин ертсе пыракан компание е патшалăхăн шутланман пенси фондне палăртман пулсан, унăн пухăнса пыракан укçи-тенки патшалăхăн ертсе пыракан компанийĕнче инвестициленет.

Патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăннă çын ватлăха пула пенсие тухать пулсан е тата çул çитмесĕрех пенсие тухнă чухне те пĕтĕм суммăна илме пултарать. Ун шутне çын хывса тăнă взноссем те, патшалăх хушса финансланин сумми те, инвестици тупăшĕ те кĕреççĕ.

## Кам хăш фонда килĕштерет

***Паллă ĕнтĕ, хальхи вăхăтра пирĕнтен кирек кам та хăйĕн пенсийĕн пухăнакан пайне РФ Пенси фондĕнче те, çавăн пекех патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенче те йĕркелеме пултарать. Районта ку енĕпе çак вăхăта лару-тăру мĕнлерех-ха? Çак ыйту çине хурав пама ыйтрăм эпĕ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхне Ольга АЛЕКСЕЕВĂНА:***

– Кăçал çулталăк пуçланнăранпа районĕпе 67 çын хăйсен пенсийĕн пухăнакан пайне ăçта вырнаçтарасси пирки йышăну турĕ. Республикипе кун пеккисем 26 пин ытла çын. Иртнĕ çулхи çав тапхăрта районта пурăнакан 73 çын хăйсен пенсийĕн пухăнакан пайне ăçта йĕркелессипе заявлени çырса панăччĕ.

Хăш пенси фондне кăмăллакансем пирки çавна калама пултаратăп. Кăçалхи 67 çынран 61-шĕ РФ Пенси фондĕнчен тухса патшалăхăн шутланман пенси фондне суйласа илчĕ, 6-шĕ хăйсен пенсийĕн пухăнакан пайне ертсе пыракан компанисене хывма кăмăл турĕ. Патшалăхăн шутланман пĕр пенси фондĕнчен теприне куçакансем пулмарĕç.

Хăйсен пенсийĕсен пухăнакан пайĕсене инвестицилемелли меле 2003 çулта туса пачĕç. Унтанпа районĕпе граждансенчен 2059 заявлени йышăннă. Çавна та каласа хăварас пулать. Хăйсен пенсийĕсен пухăнакан пайне инвестицилесси пирки пĕр хут та заявлени çырман граждансен вăл патшалăхăн ертсе пыракан «Внешэкономбанк» компанийĕнче пухăнать.

Ертсе пыракан компание суйласа илесси е патшалăхăн шутланман пенси фондне куçасси пирки заявленисене декабрĕн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр çырса парас пулать. Вĕсене РФ Пенси фончĕн кирек хăш управленийĕнче те, кунпа пĕрлех трансферагент центрĕсенче те (алă пуснисене çирĕплетессипе РФ Пенси фончĕпе килĕшӳ тунă банксенче, патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенче тата ытти организацисенче) йышăнаççĕ. Чăваш Республикинче кун пек килĕшӳсем Перекет банкĕпе, патшалăхăн шутланман «Большой НПФ», «КИТ Финанс», «Промагрофонд» тата «РГС» пенси фончĕсен филиалĕсемпе пур. Заявленисене почтăпа та ярса пама пулать, анчах та алă пуснине нотариус çирĕплетни кирлĕ пулать.

Хăйсен пенсин пухăнакан пайĕсене инвестицилеме вĕсемшĕн хăçан та пулин пенсин пухăнакан пайĕ çине страховани взносĕ куçарнисен пурин те право пур. Тĕпрен илсен кусем вĕсем 1967 çулта тата ун хыççăн çуралнă арçынсемпе хĕрарăмсем тата хăйсем миçе çултине пăхмасăрах патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнакансем.

Патшалăх çирĕплетнĕ списокра ертсе пыракан 52 компани тата патшалăхăн шутланман 114 пенси фончĕ. Хăйсен укçи-тенкине вĕсенчен хăшне шанса парасси – кашнин хăйĕн ирĕкĕ. Ертсе пыракан компанисен тупăшлăхĕ пирки информаци Раççей Пенси фончĕн сайтĕнче (www/pfrf/ru) вырнаçтараççĕ. Вĕсем пирки пенси фончĕн районти управленийĕнче те паллашма пулать.

2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсин пухăнакан пайне илме тивĕç пенсионерсем пухăнакан пенси укçи-тенкине, вăл шутра укçана ертсе пыракан компанисенче тата патшалăхăн шутланман пенси фончĕсенче инвестицилениpe тунă тупăша илме тытăнчĕç. Республикипе кун пек çынсем 12 пин ытла ĕнтĕ.

**Уйăхлăх**

## «Психологи культури – сывлăх никĕсĕ»

**Çак ятпа Раççей Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ сотрудниксем хушшинче информаципе ăнлантару ĕçĕсен акцийĕн уйăхлăхне ирттернĕ. Çак кунсенче унăн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ.**

Акци пĕтĕм республикипех октябрĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса пĕр уйăх хушши пынă. Унăн тĕп тĕллевĕ – кашни сотрудника харпăр хăйне туйăмсем тĕлĕшĕнчен мĕнле тытни çине тимлĕх уйăрттарасси тата психологи проблемисене татса памалли çулсене кăтартса парасси.

Çак ĕçе фондра штатри психолог йĕркелесе туса пырать. Акцие йĕркелеме ăна республикăри психологи службисен специалисчĕсем те пулăшма пулнă. Акци планне «çавра сĕтел» ирттерсе сӳтсе явнă. Унта РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева, ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин тĕп психиатр специалисчĕ Марина Макарова, ЧР Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствин психологипе педагогика реабилитацийĕн тата коррекцийĕн центрĕн, «Центры взаимоотношений» тренинг компанийĕн представителĕсем хутшăннă.

Акци вăхăтĕнче республикăри тата районсенчи психологи службисен специалисчĕсем Пенси фончĕн коллективĕсенче професси ăсталăхне туптассин, стреслă лару-тăрусене чăтса ирттерессин ыйтăвĕсемпе 7 лекци, релаксаци техники тата стрессене ирттерсе ярасси пирки 9 тренинг занятийĕ йĕркеленĕ. Фонд психологĕ сотрудниксемпе уйрăмшаррăн консультацисем, анонимлă майпа анкетировани ирттернĕ, памяткăсемпе тата брошюрăсемпе паллаштарнă. Кунсерен вара электронлă майпа ăсчахсен сĕнĕвĕсене ярса парса пурин кăмăлне те çĕкленĕ.

Ăнлантару ĕçне активлă хутшăннăшăн Пенси фончĕ республикăри псхологи службисен специалисчĕсене пысăк тав сăмахĕ калать.

## Юсавра та пулăшать

**Пулăшу**

Раççей Пенси фончĕ Кӳкеçри интернатсенче юсав ĕçĕсем туса ирттерме тата Шупашкар районĕн социаллă пулăшу центрĕ валли автомашина туянма 4,3 миллион тенкĕ уйăрса панă. Çавăн чухлех республика бюджетĕнчен финансланă.

Ытларах суммăна ватă çынсемпе инвалидсен интернат çуртне тата ăс-тăн енчен аталанса çитеймен ачасен интернат çуртне юсама уйăрнă. Районти социаллă пулăшу центрĕнче уйăрнă укçа-тенкĕпе вара ватă çынсене васкавлă социаллă тата медицинăпа социаллă услугăсем паракан мобильнăй бригада валли автомашина килсе çитĕ.

Республикипе пĕтĕмĕшле Чăваш Енĕн социаллă программисене пурнăçлама 2012 çулта Раççей Пенси фончĕ 25,5 миллион тенкĕ уйăрнă. Вăл шутран Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн пуçарăвĕпе РФ Пенси фондĕнчен хушма укçа 18,5 миллион тенкĕ уйăрма май килнĕ. Пуçарăва çирĕплетсе республика бюджетĕнчен те çавăн чухлĕ сумма уйăрнă. Мĕншĕн тесен социаллă программăна Раççей Пенси фончĕпе Чăваш Республикин Правительстви пĕр шайра финанслаççĕ.

Укçа-тенкĕне социаллă 6 учреждение капиталлă юсав ĕçĕсем тума, ватă çынсене васкавлă социаллă тата медицинăпа социаллă услугăсем паракан мобильнăй бригадăсем валли 9 автомашина туянма уйăрнă.

Социаллă программăра çавăн пекех ĕçлемен пенсионерсене адреслă социаллă пулăшу пама укçа-тенкĕ уйăрассине те пăхса хăварнă. Пĕр хут паракан пулăшăва ватлăха пула е инвалида тухнине пула Пенси фончĕн органĕсем урлă ĕç пенсийĕ илсе тăракан, йывăр лару-тăрăва лекнĕ ĕçлемен пенсионерсем тивĕçеççĕ. Адреслă пулăшу парассине тата унăн виçине пенсионер заявленине кура социаллă хӳтлĕх органĕ палăртать.

Раççей Пенси фончĕ регионсен бюджечĕсенчен пĕр шайрах финанслассин йĕркипе социаллă программăсене пурнăçлама 2000 çултан тытăнса хутшăнать. 12 çул хушшинче Пенси фончĕ Чăваш Республикине çапла майпа 252 миллион ытла тенкĕ укçа уйăрса панă. Вăл шутран 74 миллион тенкĕ – ĕçлемен пенсионерсене адреслă пулăшу пама. 178 миллион тенкĕ социаллă пулăшу центрĕсен пурлăхпа техника базине çирĕплетме уйăрнă.

**Ыйту – хурав**

## Хваттер – пĕрлехи харпăрлăх

***Енчен те хваттере çамрăк мăшăр ача амăшĕн капиталĕн укçи-тенкипе усă курса туяннă пулсан, ăна сутма право пур-и?***

**М. СЕМЕНОВА.**

Мăн Сĕнтĕр.

Ача амăшĕн капиталĕпе усă курса туяннă хваттере пĕрлехи харпăрлăх шутне çирĕплетме тивĕç. Апла пулсан харпăрлăх прави ашшĕ-амăшĕпе пĕрлех вĕсен пур ачин те пур. Çак обязательствăна пăхăнмасăр хваттере сутса яни саккуна пăсни пулать. Ун пек чухне законодательствăпа килĕшӳллĕн харпăрлăх хуçине айăплама пăхнă. Çемье членĕсен пĕрлехи харпăрлăхне çирĕплетнĕ хваттере сутнă чухне çул çитмен ачасен интересĕсене те шута илни кирлĕ.

**Вулакансене аса илтеретпĕр. Пенси фончĕн районти управленийĕнче тӳрĕ лини телефонĕ пур. Хăвăра интереслентерекен ыйтупа 62-8-91 номерпе шăнкăравлама пултаратăр.**

**Кăларăма В. Шапошников хатĕрленĕ.**

# Вăхăтлăха та, яланлăха та ĕç тупса пама тăрăшаççĕ

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

***Муркаш районĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн ĕçĕ-хĕлĕнчи пĕлтерĕшлĕ енĕсен шутне халăха республикăри тата районти ĕç рынокĕнчи лару-тăрупа паллаштарасси пулса тăрать. Çак ыйтăвăн çивĕчлĕхне кура ĕнтĕ ĕçпе тивĕçтерекен центр информаципе тăтăшах район хаçатĕнче те, Интернет сетĕнче те вырнаçтарать. Кунсăр пуçне центр специалисчĕсем тĕрлĕ канашлу-семинарсенче те тухса калаçма ӳркенмеççĕ, çамрăксем валли, ытти ӳсĕмри ĕç шыракансем валли ятарлă мероприятисем irттереççĕ.***

Ĕç рынокĕнчи лару-тăру пирки тĕплĕнрех пĕлес тесен уйрăм çынсем ĕçпе тивĕçтерекен центра ятарлă заявлени-анкета çырса пама пултараççĕ. Çак заявленипе килĕшӳллĕн асăннă информацие çынсем тӳлевсĕрех темиçе хут та илме тивĕç.

Çак услугăпа районта пурăнакансем сахал мар усă кураççĕ. Акă ноябрĕн 28-мĕшĕ тĕлне унпа пурĕ 526 çын усă курни паллă. Вĕсемпе кашнинпех уйрăм калаçу та, ыйтăва тивĕçтерессипе ушкăнсемпе те тĕл пулусем йĕркелесе ирттернĕ. Çынсем ытларах вакансисем пуррипе, ĕç укçи калăпăшĕпе кăсăкланаççĕ, укçа-тенкĕ пулăшăвĕ тата социаллă пулăшу пирки те ыйтса пĕлес текенсем сахал мар. Ĕçпе тивĕçтерессипе çыхăннă саккунсене пĕлес текенсем те чылайăн.

Çулталăк пуçланнăранпа ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне Муркаш районĕн ĕçпе тивĕçтерекен центрне ĕç шыраса 1196 çын пулăшу ыйтса пынă. Официаллă майпа ĕçсĕррисен шутĕнче 47 çынна регистрациленĕ. Çак хисеп районти ĕçлекенсен шучĕн 0,23 процентне чухлĕ пулать. Паянхи куна пирĕн районта вакански сахал мар. Ĕç паракансем (вăтăр иккĕн) пурĕ 175 вакансии пуррине пĕлтернĕ.

Муркаш районĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕ кăçал та, иртнĕ çулсенчи пекех, 2011–2013 çулсенче ĕçпе тивĕçтермелли ведомство программине тĕпе хурса ĕçлет. Ăна пурнăçласа январь– ноябрь уйăхĕсенче 1078 çынна вăхăтлăх е яланлăх ĕç тупса панă.

Уйрăм мероприятисем ирттерсе 98 çынна обществăлла ĕçсене явăçтарнă. 14–18 çулхи 670 çамрăка вăхăтлăх ĕç тупса панă. Ĕç шырассинче йывăрлăхсем тӳсекеннисен йышне кĕрекен 6 çынна ĕçе вырнаçтарнă.

Ĕçпе тивĕçтерекен центр пулăшнипе пирĕн районти çынсем республика тулашне те ĕçе кайма пултараççĕ. Ку вăхăта 24 çын çак пулăшупа усă курнă та ĕнтĕ. Вĕсем Раççейри ытти регионсенчи организацисенче укçа ĕçлесе илнĕ.

Центра алла пĕр-пĕр професси илес текенсем те кулленех пырса тăраççĕ. Кăçал акă çакăн пек 39 çынна вĕренме янă. Вĕсенчен 27-шĕ ĕçсĕррисем, 12-шĕ вицĕ çулчченхи ачаллă амăшĕсем пулнă.

Вăхăт ыйтнипе тан пырса халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр социаллă партнерсемпе тачă çыхăнура ĕçлеме тăрăшать. Ĕç паракансене информаципе тивĕçтересси, вĕсене ĕç рынокĕнчи лару-тăрупа паллаштарса тăрасси кунсерен лайăхланса, пахалăхларах пулса пырать. Ку тĕлĕшпе ĕçпе тивĕçтерекен центрта видео-чат мелĕпе усă курса та ĕçлеççĕ («Scype» программа). Ĕçпе тивĕçтерекен центр электронлă услугăсемпе тивĕçтерессине те ĕçе кĕртнĕ. Электронлă почтăпа ĕçпе тивĕçтерекен центра йышăнăва çырăнма та, професси юрăхлăхĕн тестне çырма та, обществăлла ĕçсене хутшăнма килĕшнине пĕлтерсе заявлени çырма та, ытти услугăсем илме те май пур. Ĕç паракансем те информацие электронлă майпа ыйтса илме пултараççĕ.

Профессисемпе, ĕç рынокĕнчи лару-тăрупа паллаштарнă чухне хальхи вăхăтра ытларах рабочи профессийĕсем кирлине палăртмалла. Акă кăçал та ĕçпе тивĕçтерекен центрта çĕвĕç, тракторист, бульдозерпа, экскаваторпа ĕçлекенсем, портной, сварщик, парикмахер тата ытти ĕç специальноçне алла илнĕ çынсем кирли паллă пулнă.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ăрушă чир никама та шеллемест

Паян – СПИДа хирĕç кĕрешмелли кун

***СПИДа хирĕç кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун пирĕншĕн – пысăк асăрхаттару вырăннех. Мĕншĕн тесен медицина хальлĕхе çак чире сиплеме вĕренсе çитеймен. Çамрăксене те йĕркелĕхе, сывă пурнăçпа пурăнма явăçтарасси йывăррăн пырать: эрех-сăра, пирус, наркотик тата йĕркесĕр ар çыхăнăвĕсем хуçаланаççĕ.***

***СПИД чирĕ пирки тĕплĕнрех Муркашри районăн тĕп больницин эпидемиолог врачĕпе Г. СОКОЛОВĂПА калаçтăмăр.***

**– Галина Георгиевна, СПИД мĕнле чир иккенне вулакансене тепĕр хут аса илтерĕр-ха, тархасшăн.**

– ВИЧ-инфекципе СПИД çинчен илтмен, пĕлмен çын халĕ çук та пулĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем пирĕнтен таçта инçетре мар. Çавăнпа та кашнинех чир çинчен лайăх пĕлмелле. Пĕлекен çын чиртен те сыхланать.

Нумайăшĕ ВИЧ тата СПИД пĕр диагноз тесе шутласа йăнăшать. ВИЧ – çын организмĕн хӳтĕлĕх тытăмне (иммунитета) сиен кӳрекен вирус. Çак вирус лекнĕ çын 10–12 çул хушши хăйне сывă çын пек туйма, анчах та вируса ыттисене ертме пултарать. Вирус çынна пĕрре лекрĕ пулсан ун организмĕнче мĕн виличченех пурăнать.

Вирус ернĕ хыççăн 10–15 çултан, хăшĕсен татах та иртерех, СПИД тапхăрĕ пуçланать. Ку организмăн хӳтĕлĕх системи начарланса пынинчен килет. Вăл начарлансан çын организмĕ ытти инфекцисемпе кĕрешейми пулать.

**– Апла пулсан ытти чирсем те организма çăмăллăнах парăнтараççĕ пулĕ?**

– Çапла. Çыннăн ӳпке чирĕсем пуçланаççĕ, тĕрлĕ çĕрте шыçăсем тухаççĕ, çын ырханланать, ӳт çине шатра тухать, нерв системи тата вар-хырăм пăсăлать. Чĕрепе юн тымарĕсем япăх ĕçлеме пуçлаççĕ, çыннăн психика улшăнать. Хальхи вăхăтри пысăк пахалăхлă эмелсемпе усă курмасан чирлĕ çын вицĕ çултан ытла пурăнаймасть. Вируса аталанма чаракан препарат чылай, çапах та хальхи вăхăтра ВИЧ-ран сывалма пулмасть.

Паянхи кун СПИДпа чирленĕ çынсем пурте вилеççĕ. Чиртен сыхланма вакцина е сыворотка тавраш çук. Вирус ернĕ çынсен пурнăçне СПИД пуçланиччен тăсма май пур, анчах ку питĕ хакла ларать.

**– Пирĕн районта СПИДпа чирленисем пур-и? Вулакансене мĕн асăрхаттарса хăварнă пулăттăр?**

– Малтанах манăн асăрхаттару ĕçĕ пирки каласа хăварас килет. Пирĕн районти çынсене çак хăрушă чиртен хăтарас тесе эпир тĕрлĕ чирсемпе аптăракансемпе яланах калаçусем ирттеретпĕр, шкулсенче тата ытти учрежденисенче тăтăшах лекцисем вулатпăр. Кунсăр пуçне кашни фельдшерпа акушер пунктĕнче санитари бюллетенĕсем пур. ВИЧ-инфекци тата СПИД пирки калакан астумалăх çырнисене те пур врач пӳлĕмĕнче тенĕ пекех çынсем хушшинче саратпăр. Никамăн килне те хăрушă СПИД чирĕ ан кĕтĕрчĕ тетпĕр.

Апла пулин те пирĕн районта та СПИДпа чирлисем пур. 10 çын вĕсем. Республикăра вара иртнĕ вунă уйăхра 1449 тĕслĕх пуррине çирĕплетнĕ, вĕсенчен 115-шне кăçал тупса палăртнă. Калас пулать, пĕлтĕрхи вунă уйăхра 100 çын тупса палăртнă пулнă. Республикăри 289 çын çак хăрушă чире пула çĕре кĕнĕ.

Çавăнпах пурне те сывă пурнăç йĕрки тытмалли пирки тепĕр хут аса илтерес килет. Арлă-арăмлă пурăнакансене презервативпа усă курма, мăшăрсене улăштармалла маррине асра тытма хистетпĕр. Пур çыннăн та кăмăл-сипет тасалăхĕ пулни, эрех-сăра ĕçсе е наркотиксемпе усă курса пуçа минретменни – СПИДпа кĕрешмелли чи хăватлă утăм.

**С. СЕМЕНОВА,**
**ЧППУ студентки калаçнă.**

# Ачасен прависене хӳтĕлес тĕллевпе

Акци

Пирĕн районта та, республикăри пекех, ноябрь уйăхĕнче тĕрлĕ ведомствăсем хутшăннипе «Ачасем тата çемье» акци иртрĕ. Акцие полици сотрудникĕсем кăна мар, çул çитменнисемпе ĕçлекен комисси членĕсем, опекăпа попечительство секторĕн специалисчĕсем, сывлăх сыхлавĕнче тата вĕрентӳ сферинче вăй хуракансем хутшăнчĕç.

Акци тĕллевĕ çул çитмен ачасем çине япăх витĕм кӳрекен, эрех-сăрапа ашкăнакан, наркотиксем е психотроплă хутăшсем йышăнакан ашшĕ-амăшĕсене тупса палăртасси тата вĕсене шалти ĕçсен пайĕнчи учета илесси пулчĕ.

Çак вăхăтра эпир 15 çемьене çитсе килтĕмĕр. Çав çемьесенчи 13 ашшĕ-амăшне РФ Административшă право нормисене пăснисен кодексĕнчи 5.35 статйипе килĕшӳллĕн явап тыттарма тиврĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем çул çитмен ачисене воспитани парассипе, вĕсене пăхса тăрассипе, вĕрентессипе хăйсен тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламаççĕ.

Çак вăхăтра ашшĕ-амăшĕн прависенчен хăтарасси валли икĕ ĕç пухмалла пулчĕ. Пĕр ашшĕ-амăшне 16 çул тултарман ачи алкоголь продукцине ĕçнĕшĕн КоАПăн 20.22 статйипе килĕшӳллĕн административлă явап тыттартăмăр. Аслă ăрури тепĕр çынна çул çитменнисем алкоголь продукцине ĕçме явăçтарнăшăн 6.10 статьяпа килĕшӳллĕн ответ тыттартăмăр.

Пĕр сутуçăна çул çитмен ачана пирус сутнăшăн, клубра çĕрлехи вăхăтра çул çитменнисем пулнăшăн пĕр ялти клуб администраторне те явап тыттартăмăр. Çак вăхăтрах çул çитмен ачана преступлени туma явăçтарнă тĕслĕхпе те тĕл пулма тӳр килчĕ. Ку тĕлĕшпе те аслă ăрури çыннăн саккунпа килĕшӳллĕн явап тытмалла пулать.

***Вулакансене вара çакна асăрхаттарса калас килет. Çул çитменнисене алкоголь продукцине сутнăшăн паракан штраф виçи ноябрĕн 24-мĕшĕнчен ӳсрĕ. Çапла майпа йĕркене пăснăшăн малашне граждансен (сутуçăн) 30–50 пин тенкĕ таранах кăларса хума тивĕ, должносçи çынсен – 100–200 пин тенкĕ чухлĕ, юридици сăпачĕллисен – 300–500 тенкĕ таран. Кĕскен каласан штрафсем вунă хута майлах ӳсрĕç. Çак улшăнусене те ачасен прависене хӳтĕлес тĕллевпех йышăннă.***

**В. АЛЕКСЕЕВ,**
**полици пайĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени пуçлăхĕ.**

# Волейболла выляма – Оринина

Иыхрав

Çитес шăмат кун, декабрĕн 8-мĕшĕнче, Орининти вăтам шкулта С. Колбасов спорт маçтăрĕн (кикбоксинг) парнисене çĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвĕ иртет. Унта тĕрлĕ хуçалăхсемпе пĕрлешӳсен, ял тăрăхĕсен, шкул ачисен командисене йыхравлаççĕ.

Ăмăрту шкулти спорт залĕнче 10 сехетре пуçланать.

**Хамăр инф.**

# Спортра маттур



***Районта ĕçлекен çамрăксен чӳк уйăхĕн 23-мĕшĕнче иртнĕ спартакиадине Шетмĕпуç ял тăрăхĕн яшсемпе хĕрсен команди хаваспах хутшăнчĕ. Пирĕн командăри çамрăксем тупăшусенче малтисен ретне кĕме пултарчĕç. Артур Чернов, Сергей Петров, Павел Павлов, Валентина Александрова, Алексей Павлов, Надежда Семенова, Олеся Смирнова, Игорь Смирнов Шетмĕпуç ял тăрăхĕн чысне тивĕçлипе хӳтĕлерĕç. Вĕсенчен тĕслĕх илме ытти çамрăксем те кая юлман.***

**Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи çамрăксен канашĕ.**

Шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсенче

# Юрату çемьерен пуçланать

Шкулчченхи вĕрентӳ учрежденийĕсенче ачасене çемьене, тăван яла, хăйсем çӳрекен ача садне, çĕр-шыва юратма, хаклама вĕрентессипе анлă ĕçсем пурнăçлама тăрăшаççĕ. Ачасем хула, çĕршыв тенине, паллах, тӳрех йышăнтараххăн ăнланаççĕ. Анчах та çак ăнлантару ĕçне çемьерен, тăван кĕтесрен пуçлани ĕçри пăтăрмахсене сирме пулăшать.

Нумаях пулмасть эпир хамăрăн воспитанниксемпе пĕрле гербсем пирки калаçу ирттертĕмĕр. Çакăн хыççăн вара гербсен ӳкерчĕкĕсене тума ашшĕ-амăшĕсем те хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен ачисемпе пĕрле çак ĕçе килĕштерсе пурнăçлани сисĕнчĕ. Ачисем герб çинче мĕн курма ĕмĕтленнине пĕлтерчĕç, ашшĕ-амăшĕсем вара интересленсех тăрăшрĕç.

Палăртнă кун гербсем пурте ушкăна «çитрĕç». Эпир курав йĕркелерĕмĕр. Ачасем хăйсен çемье гербĕсем çинчен мăнаçлансах каласа пачĕç. Вĕсемшĕн çемье чăнах та хаклă пулнине ĕненмерме пултарчĕç.

Çак ĕç çемьесенчи туслăха татах та çирĕплетме пулăшрĕ тесе шутлатпăр. Çемье гербне ӳкерттерессине эпир пĕрремĕш çул кăна туса ирттерместпĕр. Ку енĕпе тахçанах ĕçлеме тытăннă. Халĕ пирĕн ача садĕнче чылай çемьен гербĕ упранать. Кашни хăйне май, кашниех çемьешĕн, ачасемшĕн хаклă.

**О. ПРОКОПЬЕВА, А. ТИХОНОВА,**
**«Путене» ача сачĕн воспитателĕсем.**

# Çĕнĕ ушкăн концертпа савăнтарчĕ

Иртнĕ вырсарни кун Раççейри амăшĕн кунне халалласа пур çĕрте те уяв касĕсем иртрĕç пулĕ. Редакцие те çакăн пирки пĕлтерсе çырнă çырусем килеççĕ.

Акă Вомпăкассинчи ял клубĕнче иртнĕ уяв пирки те унти уяв касĕнчи концерта куракансем çырса пĕлтерчĕç. Вомпăкасси ялĕнче клуб администраторĕ Юлия Фомина пуçарулла пулнипе «Илемпи» ушкăн йĕркеленнĕ. Ушкăнпа репетицисем ирттерме «Янаш» халăх ансамблĕн художество пултарулăх ертӳçи Родион Петров килĕшнĕ.

Çапла вара иртнĕ шăмат кун кунта амăшĕн кунне халалланă уяв концертне кăтартнă: юрăкĕвĕпе пĕрлех сцена çинче пурнăçри шӳтлĕ лару-тăрусене те артистсем пекех выляса панă. Концерт хыççăн коллективăн малашнехи планĕсене те палăртнă, уяв каçне çавра сĕтел тавра сӳтсе явнă.

# Кил тата хушма хуçалăх



# «Пурнăç çĕр ĕçĕпе туслаштарчĕ»

**Пахча çимĕçпе кăсăкланать**



Валентина Антонова Турай ял тăрăхĕнчи Кĕçĕн Чураш ялĕнче пурăнать. Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче уй-хир бригадирĕнче нумай çул вăй хунăскер тивĕçлĕ канура та алă усса лармасть. Çакна хаçат вулакансем çак сăн ӳкерчĕкренех (Тыр-пул уявĕнче тунă) асăрхама пултараççĕ: кунти пĕтĕм продукци Валентина Михайловнăпа унăн мăшăрĕ Виктор Владимирович тăватă ачин тата 3 мăнукĕн пулăшăвĕпе килти хушма хуçалăхра туса илнĕскерсем. Кашни сухан, çĕр улмипе кишĕр, купăстапа пан улми (**сăн ӳкерчĕкре**) хысĕнче – ял çыннисен çичĕ хут тар юхтарăвĕ. Кĕрхи йĕпе-сапаран пăрăнса киоскалла кĕрсенех кил хуçисем хушма хуçалăхра тирпейлĕх ыйтăвне тĕпе хурса ĕçлени палăрчĕ.

– Ĕçлемелле, умри ĕçе чуна парса пурнăçламалла, юратса тунă ĕç ĕмĕре тăсать, çамрăклăха упрать. Ĕçленипе пĕрлех эрех-сăраран аякра тăни те – пурнăçра яшлăха тăснин тĕп вăрттăнлăхĕ. Ĕçлекене патшалăх та пулăшусăр хăвармасть. Çакна эпир йăлтах хамăрăн килти хушма хуçалăх аталанăвĕ çинче туятпăр, – пурнăç тути-масипе самаях кушăрханă пит çăмартисене кулă кăларса калаçать Валентина Михайловна.

Ярославка ял тăрăхĕнчи Тăмкасси хĕрĕпе Кĕçĕн Чураш каччи çемье çавăрнăранпа 39 çул хыçа юлчĕ. Çак хушăра вĕсем пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçĕнчен пăрăнмасăрах килти хушма хуçалăха та аталантарнă. «Вун-вун çул пурăнатпăр ĕнтĕ эпир пĕрлешнĕ хыççăн. 2 ывăлпа 2 хĕре ура çине тăратса пурнăç çулĕ çине кăлартăмăр. Вĕсем те килти хушма хуçалăх ĕçĕнчен пăрăннине астумастăп, – малалла калаçрĕ пахчаçă. – Çак çулсенче кил-сурта хамăр вăйпа хăт кĕртес тесе пурăнтăмăр. Мĕн туни паян куç умĕнче. Пырса курăр», – терĕ хăйсен хуçалăхĕнче туса илнĕ продукципе кăмăллă кил хуçи арăмĕ.

Манăн пĕлĕшĕм хăйсен килти хушма хуçалăхĕнче сумалли ĕне, çуллен майлах тына е вăкăр, сысласем, хурсемпе йышлă чăх-чĕп, сурăхсемпе кроликсем тытнине, вĕсемпе тĕллевлĕ ĕçлесе кил-çурт çавăрнă çĕрте усă курнине те пытармарĕ.

Килти хушма хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе тата пахча çимĕç туса илессипе интереслĕнекенскер хăйсен килти хушма хуçалăхри продукцийĕпе çулленех районта иртекен «Кĕр парнисем» выставкăна хутшăнать, дипломсене тивĕçет.

– Вăтам шкул хыççăн эпĕ çĕвĕç тата парикмахер ăсталăхне алла илнĕччĕ. Анчах пурнăç мана çĕр ĕçĕпе туслаштарчĕ те кунта вăй хунишĕн паян эпĕ пĕртте хама хурламастăп. Пахча ĕçĕпе кăсăкланнăран пахча çимĕç вăрлăхне те хамах янтăлатăп. Пирĕн хуçалăхра çĕр улмин 7 – 8 сорчĕ çулленех ăнса пулать. Çапах паян сутлăха илсе тухнă «Удача» сорт хама ытларах килĕшет, – кăмăллăн калаçать В. Антонова.

Ĕçчен хĕрарăм 40 сотка пахчари пĕр тăваткал метр çĕре те усăсăр выртармасть. Ытти культурăсемпе пĕрле кроликсем валли кукуруза та унăн пахчинче çулленех ăнса пулать-мĕн.

Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕнче инженерта 37 çул ĕçленĕ мăшăрĕ Виктор Владимирович та паян килти хушма хуçалăхри ĕçсем çине яваплăха туйса пăхать. Нихăш ĕçре те ят ямасть вăл.

Пурнăç йывăр теççĕ. Анчах Валентина Михайловнăпа иртнĕ калаçура ĕçре иртнĕ кунсем çеç йывăрлăхсене сирни куç умĕнчен каймарĕ.

– Иртен пуçласа каçчен ĕçленине эпир хамăр çемье пурнăçĕнче çуккине туйман. Çук тесе ĕç пăрахса ларман. Çакăнтан тухать те пулĕ вăл вăрăм пурнăç ăнăçăвĕн тымарĕ, çамрăк кунсен хунавĕ, – терĕ ăста пахчаçă хамăр калаçăва вĕçлесе.

Тивĕçлĕ канура та пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ĕнерхи ĕçченĕсем ĕçрен сивĕнменни мана савăнтарчĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Тĕпелте**

## Килти сыр

3 литр сĕт çине 2,5 кг тăпăрчă ямалла. Вĕретме кĕртмелле. Пĕрешкел хутăш пулса çитсен тăпăрчă хутаççипе сăрхăнтармалла. Сăрхăнтарнă тăпăрчăна 2 çăмарта, кирлĕ чухлĕ тăвар, пĕр апат кашăкĕ услам çу ямалла. Хăвăрт пăтратмалла та чашăка пушатса полиэтилен хутпа тата ăшă тытма çиелтен утиялпа витмелле. 12 сехет ларсан холодильника вырнаçтармалла та тепĕр 12 сехетрен çиме юрать.

Ан ӳркенĕр, ĕçлесе пăхăр. Сырĕ тутлă пултăр!

**В. ВАСИЛЬЕВА.**

Мăн Сĕнтĕр сали.

## Купăстапа ыхра

2 кг купăста çине 2 – 3 кишĕр тата пĕр пуç ыхра кирлĕ. Çаксене вĕттĕн тураса 5 литр кĕрекен савăта ямалла. Ытларах хатĕрлес тетĕр пулсан пысăкрах савăт вырăнлă.

Маринад валли 1,25 литр шыв, çур стакан сахăр песукĕ, 2 апат кашăкĕ тăвар, 1 стакан тип çу, десерт кашăкĕпе 70 проц. уксус илмелле. Вĕрекен хатĕр шыва купăста çине ямалла та пусăрăнтармалла.

## Исĕм çырлипе купăста

Пĕр пуç купăста турамалла та пĕр апат кашăкĕ тăварпа хутăштармалла. Шултăра терка витĕр 3 кишĕр кăлармалла. Унта вĕттĕн туранă 2 пуç сухан тата 1 ыхра хушмалла. Пурне те пĕрле пăтратмалла та 100 г исĕм çырли ямалла.

Маринад валли 0,5 литр çине 1 стакан сахăр песукĕ, тип çу тата уксус кирлĕ. Вĕреме кĕртнĕ маринад шывне купăста çине ямалла.

**Эсир епле шутлатăр?**

## Пахча-çимĕç акрăм

Вăхăт хĕл еннелле кусать пулсан та юрĕ ĕнер-паян çеç çĕр питне витрĕ.

Эпĕ юлашки çулсенче хăш-пĕр пахча-çимĕç культурисене чӳк уйăхĕн вĕçĕнче акса хăварассине йăлана кĕртрĕм. Çакна валли йăрансем хатĕрлессипе вара малараххах тăрăшатăп. Пахча-çимĕç ăнса ӳстĕр те тухăçпа савăнтартăр тесе тăпра пулăхне лайăхлатассине те манмастăп. Çакна валли кĕркунне тăпра кăпкаласа умĕн çителĕклĕ чухлĕ минераллă удобрени, çĕрнĕ тислĕк хыватăп.

Кун хыççăн йăрансем çинче пĕр-пĕринчен 15 см хушă хăварса 3 см тарăнăш йĕрсем тăватăп. Çапла хатĕрленĕ йăран çине кашни пахча çимĕç культурине (кишĕр, петрушка, укроп, хĕрлĕ кăшман) уйрăмшар акатăп. Аксан вăрлăха тăпрапа 1 см хулăнăш витетĕп. Вĕсен вăрлăхне çуркуннехипе танлаштарсан кăшт ытларах варăнтаратăп: тĕрлĕ сăлтавсене пула хĕл каçа шăтаслăх пахалăхĕ чакма пултарать. Çуркунне вара вĕсем тĕрĕс-тĕкел шăтса тухсан вăхăтра сайралататăп. Паллах, кĕркунне акмалли вăрлăха шӳтерместĕп.

Кĕркунне акса хăварнин усси те пысăк. Пахча-çимĕç культурисем чылай маларах шăтса тухаççĕ, иртерех çимĕç пама пуçлаççĕ.

Раштав уйăхне кĕтĕмĕр. Кăçал та юлашки кунсенче юр çăвиччен кăна кĕрхи культурăсем акса хăвартăм. Ĕçе пурнăçлама ĕлкĕрнишĕн паян савăнатăп кăна.

**А. ШАРИКОВ, пахчаçă.**

**Пахчаçă сĕнет**

## Хĕлле лайăх упранĕ

***Кăçал пирĕн пахчара кишĕр ăнса пулчĕ. Савăнмалла пек. Анчах пĕлтĕр асăннă тымар çимĕç хĕлле тĕп сакайĕнчех çĕрсе кайрĕ, хĕл каçаймарĕ. Кăçал та çапла ан пултăр тесен мĕнле упрамалла-ши ăна?***

**С. ВИШНЕВА.**



Специалистсем çакна палăртаççĕ: тымар çимĕç хĕлле лайăх упрантăр тесен çуркунне ăна лартнă чухне вăрлăха тĕрĕс имçамламалла. Çакна çитес çулхи асăрхаттару вырăнне йышăнăр. Çуркунне кишĕр акмалли лаптăка фосфор тата кали удобренийĕсене хывни те çимĕçе хĕлле тата çуркунне чылайччен упранма пулăшать. Ку асăрхаттару та çитес çур аки валли.

Килти хушма хуçалăх тытса пыракансемшĕн вара нӳхрепе хунă пахча çимĕçе тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарасси тĕп ыйту пулса тăрать. Çавăнпа та кашни ыйту çинех кунта ыттисем практикăра тĕрĕсленĕ хăйне евĕр хурав пур. Кăна валли çакна пĕлмелле: тĕп сакайĕнче е нӳхрепре ытлашши ăшă пулсан кишĕр вăхăтсăр сиенленме тата хăвăрт юрăхсăра тухма пултарать. Çапла ан пултăр, çу каçа ĕçлени кĕске вăхăтрах сая ан кайтăр тесен упрама хунă кишĕре кил хуçи сăнасах тăни вырăнлă. Япăхма пуçланисене çийĕнчех уйăрса илесси пирки ан манăр.

Кĕркунне кăларсан кил хуçи кишĕре кăштах кушăхтарнă пулсан, вăл тĕп сакайĕнче те, нӳхрепре те аван упранма кирлĕ. Меслечĕ кăткăс мар, усси – куç кĕрет. Тен, хаçат вулакансен пахча çимĕç тĕрĕс-тĕкел упрассипе татах хăйсем сăнанă-тĕрĕсленĕ сĕнӳсем пур – пĕлтерсен пуриншĕн те лайăх пулĕччĕ.

**А. СЕМЕНОВ, пахчаçă.**

# Сĕт антарасси ан чактăр

**Выльăх тухтăрĕпе калаçатпăр**

***Асаттесемпе асаннесем ĕнене çур пурнăç тесе хакланă. Ĕмĕртен пырать çак чăнлăх. Çавăнпа та ялта пурăнакан хăйĕн пурнăçне паян та ĕне усрамасăр курмасть. Çу кунĕсем хыçа юлнă май ĕнесене витере тытса тăмалли тапхăр çитрĕ. Çак вăхăтра вĕсенчен продукци илессине тивĕçлĕ шайра сыхласа хăварасси – килти хушма хуçалăхра ĕне усракан кашни çемьешĕнех пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та паян хаçат тепĕлне выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцинчи выльăх тухтăрне А. ФЕДОРОВĂНА чĕнтĕмĕр. Пирĕн калаçу ĕне усракансемшĕн усăллă пулласса шанатпăр.***

**– Алина Петровна, сĕт тата унăн тытăмĕ пирки эсир пирĕн вулакансене мĕн калайратăр?**

– Сĕт – биологилле продукт. Унăн тытăмĕнче 200 ытла усăллă компонент. Вĕсен шутĕнче тулли пĕлтерĕшлĕ 20 аминокислота, 147 çу кислоти, 4 тĕслĕ сахар, макро- тата микроэлементсем – 30, тĕрлĕрен витаминсем – 23, глицеридсемпе фосфатидсем, ферментсемпе пигментсем тата ыттисем те. Хими составĕпе тата апат пахалăхĕпе сĕтпе танлашаканни çук. Вăл тин кăна çуралнă чĕр чунсемшĕн те, кирек хăш ӳсĕмри çыншăн та питĕ вырăнлă апат-çимĕç. Пĕр литр сĕтĕн энергетика хăвачĕ 3000-4000 Джоульпе танлашать (1кДж 0,239 ккал пулать тесе шутламалла).

1 литр сĕт пулма ĕне çилли витĕр 400-500 литр юн иртмелле. Тĕслĕхрен, вăтам сĕт паракан ĕне çилли урлă талăкра 8–10 тонна юн иртет. Ĕнен продуктивлăхĕ мĕн чухлĕ пысăкрах – унăн сĕт парĕнчи сĕт çаврăнăшĕн хăвăртлăхĕ те çавăн чухлĕ ытларах.

**– Хĕл тапхăрĕн пуçламăш уйăхĕ иртсе пырать. Ку вăхăтра выльăхсене ăшă витере тытнипе пĕрлех вĕсене апатлантарнин тата пăхса усранин условийĕсем те улшăнаççĕ. Кун пирки мĕн калайратăр?**

– Пысăк сĕт продуктивлăхлĕ ĕне валли унăн юнĕнче сĕт йĕркелекен хатĕрсем тăтăшах пулни кирлĕ. Çакна, малтанах, выльăха тулăх тата вăхăтра тăрантарнипе, ĕçмелли шывпа çителĕклĕ тивĕçтернипе пурнăçлама пулать. Иккĕмĕшĕнчен, рационра тĕрлĕ компонентсем пулни апата организма кирлĕ хатĕрсем тĕлĕшпе шайлаштарма пулăшать.

Ĕнесен рационĕнче тулли пахалăхлă апат ытлă-çитлĕ пулмалла. Хуçалăхсенче те, ял çынисем те пăрулamalли ĕнесене сумаллисенчен пахарах тăрантарнипе асăрхама пулать. Тутлăхлă япаласем ĕнене уйрăмах пăрулас умĕнхи икĕ эрне хушшинче çителĕклĕ кирлĕ. Кунпа пĕрлех вĕсене усăлма активлă кăларни те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Паянхи çĕр ĕç структурипе балансла рацион тытса пырасси хĕллехи вăхăтра ускахлать. Анализсем хĕллехи апатра протеин, фосфор, кобальт, йод, А тата Д витаминсем çителĕксĕррине кăтартаççĕ. Çавăнпа та ĕнесен сăвăмĕ палăрмаллах чакса каять.

Сĕт нумай антаракан ĕне тума пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче тата килти хушма хуçалăхсенче ытларах сĕт сăвас тесен симĕс конвейер пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çакна валли вăйлă апат бази кирлĕ. Ĕнерен çулталăкне 4000 кг сĕт сăвас тесен выльăхăн чĕрĕ виçи çут çанталăкăн ырă кăтартăвĕсемпе 500 килограмран ытларах таймалла.

**– Ĕнесене витере тытнă тапхăрта час-часах вĕсене шăварассипе ыйту сиксе тухать.**

– Эсир мĕн каласшăннине ăнлантăм. Сĕт йĕркелĕвĕнче шыв паллă вырăн йышăнать. Çавăнпа та фермăсенче ĕнесем умĕнче тăтăшах шыв пулмалла. Килти хушма хуçалăхсенче вĕсене кунне 2 – 3 хут шăварассине йĕркелемелле. Сĕт антаракан ĕнешĕн календарлă çулталăк икĕ тапхăра пайланать: сĕт антарнă вăхăт тата пăрулама хатĕрленнĕ тапхăр. Пĕрремĕшĕ татах икĕ пая пайланать: улăх-çаранта çӳретнĕ тата вите-сарайĕнче тытнă уйăхсем. Ĕнесем улăх-çаранта вăтамран 135 кун çӳреççĕ пулсан, 230 кунне витере тăрса иртереççĕ. Хĕл кунĕсенче ĕнесене микро- тата макроэлементсем çителĕклĕ памалла. Вĕсене паян кашни ветаптекăрах туянма пулать.

Ĕне продуктивлăхне çӳллĕ шайра тытас текен паянхи калаçуран тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тăваса шанас килет.

**А. ПЕТРОВ калаçнă.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Чувашская Республика Моргаушского района**
**Администрация Ярабайкасинского сельского поселения**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**20.11.2012 г. № 89**
**д. Ярабайкасы**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения «О внесении изменений и дополнений в Генеральный план Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики»**

В соответствии со ст.28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003 г. № 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», ст.14 Устава Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района и Положения «О порядке организации и проведении публичных слушаний по вопросам градостроительной деятельности на территории Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики» **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту решения Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения «О внесении изменений и дополнений в Генеральный план Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики» 03 декабря 2012 года в 12 часов 00 минут в здании Ярабайкасинского сельского Дома культуры, по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, деревня Ярабайкасы, улица Молодежная, д.№16.

2. Настоящее постановление и проект решения Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения «О внесении изменений и дополнений в генеральный план Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики» опубликовать в периодическом печатном издании «Çĕнтерӳ ялавĕ» Моргаушского района Чувашской Республики.

**И.о.главы Ярабайкасинского сельского поселения**
**Э.М. АЛЕКСЕЕВА.**

ПРОЕКТ
Чувашская Республика Собрание депутатов Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района
РЕШЕНИЕ
_______2012г. № С-
д. Ярабайкасы

**О внесении изменений и дополнений в Генеральный план Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, утвержденный решением Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики от 27.11.2008 г. № С – 20/1**

В целях приведения в соответствие генерального плана Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Собрание депутатов Ярабайкасинского сельского поселения РЕШИЛО:

1. Внести в Генеральный план Ярабайкасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, принятый решением Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № 20/1, следующие изменения: место положения лесопилки, санитарно-защитной зоны, овощехранилища, линий электропередач, хозяйственных строений, дорог, водонапорных башен, зоны резерва территории для перспективного градостроительного освоения населенных пунктов.

2. Настоящее решение опубликовать в средствах массовой информации.

**Заместитель председателя Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения В.А. Любимов.**


**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ от 350 руб. кв. м. (материал + монтаж)**
2-10. **Тел.: 8-927-667-40-92.**









**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ от 3000 руб.**
**Установка, гарантия.**
**Тел.: 8-905-345-77-19.** 6-10.



АктивДеньги
Международная сеть магазинов моментальных займов
ООО «АльянсФинанс» Быстрые займы для всех
www.aktivdengi.com
телефон по региону:
8-927-668-67-87
ЗАЙМЫ
от 1000 до 50 000
только паспорт
село Моргауши
ул.50 лет Октября 5





Билеты ГОСЛОТО-купите у НАС!
ГОСЛОТО ИГРАЙ И ВЫИГРЫВАЙ!



**Переводим аккумуляторные батареи на зимний период эксплуатации. Проводим КТЦ. Гарантия. Тел.: 8-906-383-63-96.**


Администрация Сятракасинского сельского поселения извещает о проведении общего собрания долевиков, которое состоится 10 января 2013 года в 14 часов по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, д. 17, Сятракасинская сельская библиотека.

В повестку дня включены вопросы:

1. О ходе выдела земельных долей на территории сельского поселения.
2. Изменения в законодательстве по выделу земельных долей.
3. Рассмотрение и утверждение списка невостребованных земельных долей.
4. Разное.

Адрес места ознакомления с документами: Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, д. 17, время с 8-00 ч. до 17-00 ч. Кроме субботы и воскресенья. Текст объявления размещен на информационных стендах сельского поселения и на официальном сайте Сятракасинского сельского поселения.


**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Закажите зимой окна в рассрочку, установим весной. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64.** 6-10.


## Тав тăватпăр

Автанкасси ялĕнче пурăннă Леонид Аркадьевич Матвеева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, кӳршĕсене, ял-йыша, Мăн Сĕнтĕр райпо ертӳçисене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Матвеевсен çемйи.**


**Осенняя распродажа: мотоблоки, мини-тракторы, навесное оборудование, снегоуборочная техника, запчасти, ремонт. Тел.: 8-967-470-31-43.** 9-12.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
подробности по телефонам:
8-9603101816
скидки до 35%
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

**Спутниковое цифровое телевидение высокой четкости FULL и HD. Триколор 7300 руб. Телекарта 3000 руб. с. Моргауши.**
**Тел.: 8-906-385-29-30.** 10-10.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11.** 8-10.

**МОСКВА – ВАХТА!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии. З/п 27 000 – 35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 4-4.


**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78.** 1-10.

**Продаются: крупные племенные гуси, можно тушками; кролики ризен; щенки немецкой овчарки, автомобиль Приора хэтчбек недорого. Тел.: 8-927-66-55-900.** 2-2.

* * *

**Продаются березовые дрова.**
**Тел.: 8-903-065-58-68.** 1-2.

* * *

**Ĕне, вăкăр, пĕчĕк пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-905-343-60-63.** 9-10.

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97.** 9-13.

* * *

**Работа в Москве и МО: фасовщицы, упаковщицы, грузчики, комплектовщики. Жилье, питание, транспорт – БЕСПЛАТНОЕ. Вахта: 15, 20, 30, 45 дней. З/п: от 27 000 (своевременная).Тел.: 8(8352)36-03-32, 36-42-92.** 4-5.

* * *

**Работа для мужчин и женщин. Оплата высокая, обед и проезд на работу и обратно бесплатно (со всей территории района). Тел.: 8-905-343-19-10, 8-927-850-19-10.** 3-5.

* * *

**Март уйăхĕнче тăваттăмĕш пăруламалли хурашурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-960-304-26-31.**




* * *

**Апрелĕн 17-мĕшĕнче пăруламалли хура тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-376-94-04.**

* * *

**В Нижний Новгород требуются рабочие на сборочное производство автофургонов и спецавтотехники, также газоэлектросварщики с опытом работы на полуавтомате. Вахтовый метод (две недели через две). Питание, проживание бесплатно. Выезд группами до предприятия. Соц. гарантии. З/п 25000-40000 руб. в месяц. Тел.: 8-908-766-41-45 (Н.Новгород), 8-906-386-56-82 (Чувашия).** 3-8.

* * *

**Продаю с доставкой: кирпич керамический, силикатный (любых цветов); блоки керамзитобетонные, газосиликатные, фундаментные, пеноблоки; кольца колодезные; трубы асбестоцементные, профильные; арматура, цемент, сухие смеси, шифер, рубероид, профнастил, пиломатериалы. Металлоконструкции: гаражные ворота, калитка, забор, беседка, теплица, козырьки (навесы), решетки, кладочные сетки, печи, мангал, скамейки и т. п. Услуги крана-манипулятора. Тел.: 8-903-357-46-75, 8-927-880-04-83.** 1-10.

* * *

**Ĕне, вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13.**

* * *

**Августăн 15-мĕшĕнче пăруламалли çулталăкри хĕрлĕшурă тĕслĕ тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-951-76-10.**

* * *

**Кирпĕч çурт ытти хуралтăсемпе пĕрле сутатăп. Хакĕ калаçса таталнă тăрăх. Хорнуй ялĕ. Тел.: 8-927-865-07-00.**

* * *

**Продается деревянный дом (с мебелью) с надворными постройками в д. Вомбакасы, земля 40 сот.**
**Тел.: 8-917-653-15-37.**

* * *

**Март уйăхĕнче пăруламалли тынашки сутатăп.**
**Тел.: 8-927-66-55-684.**

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Сорокина Евдотия Васильевна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Нижний Томлай, ул. Овражная, д. 11.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.


ГРУПП СТС
РАБОТА!
Компания СТС Групп проводит набор сотрудников
БЕСПЛАТНОЕ ТРУДОУСТРОЙСТВО!
Зарплата за месяц: КАССИРОВ 28 800 РУБ.
КОМПЛЕКТОВЩИКОВ 25 000 РУБ.
УПАКОВЩИЦ 25 000 РУБ.
ГРУЗЧИКОВ 23 000 РУБ.
ПРОДАВЦОВ 23 000 РУБ.
ПОВАРОВ 25 000 РУБ.
СОТРУДНИКОВ КАФЕ 27 000 РУБ.
КУХОННЫХ РАБОТНИКОВ 19 000 РУБ.
АКЦИЯ! приведи друга, получи 1000 руб.
РАБОТА ВАХТОЙ В МОСКВЕ, МО и САНКТ-ПЕТЕРБУРГЕ С ПРЕДОСТАВЛЕНИЕМ БЕСПЛАТНОГО!!! ЖИЛЬЯ!!! ПРОЕЗДА!!! питания и спецодежды.
собеседования проходят по адресу: г. Чебоксары, пр. Мира, 76 Б, офис 206
муж./жен. от 18 до 50 лет, граждане РФ и РБ, без в/п.
тел.: 8(8352) 37-21-61, 8-800-700-06-75
ВНИМАНИЕ!!! Прямой работодатель!!! (звонки по России бесплатно)


Муркаш районĕн 2 № больница коллективĕ кунти васкавлă пулăшу уйрăмĕнче нумай çул ĕçленĕ
**Николай Васильевич**
**ГАВРИЛОВ**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки çывăх çыннисемпе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | суббота 1 декабря | | | | воскресенье 2 декабря | | | | понедельник 3 декабря | | | | вторник 4 декабря | | | | среда 5 декабря | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | -1 | 0 | 0 | 0 | 0 | +1 | +1 | +2 | -1 | -2 | -3 | -3 | -2 | 0 | +3 | +3 | +4 | +3 | 0 | -2 |
| Давление мм | 740 | 741 | 743 | 745 | 745 | 745 | 745 | 744 | 746 | 747 | 747 | 746 | 743 | 739 | 735 | 733 | 732 | 734 | 738 | 741 |
| Влажность % | 97 | 98 | 98 | 98 | 99 | 99 | 98 | 99 | 95 | 88 | 83 | 84 | 91 | 98 | 96 | 94 | 92 | 91 | 88 | 78 |
| Ветер м/сек | 4 | 4 | 3 | 3 | 2 | 3 | 3 | 2 | 4 | 4 | 4 | 3 | 4 | 6 | 6 | 6 | 8 | 7 | 6 | 6 |
| | Ю-В | З | Ю-З | Ю-З | В | В | Ю-В | Ю-З | С-З | С-З | С-В | В | В | В | Ю-В | Ю | Ю | Ю-З | Ю-З | З |
| Солнце восход / заход | | 09:00 | 16:23 | | | 09:02 | 16:22 | | | 09:03 | 16:22 | | | 09:05 | 16:21 | | | 09:06 | 16:20 | |
| Луна восход / заход | | 18:59 | 10:53 | | | 20:05 | 11:25 | | | 21:14 | 11:51 | | | 22:26 | 12:13 | | | 23:40 | 12:32 | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 30.11.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4689.